

Yandex.ru сайтран.

# ЯЛТИ БИЗНЕС

сайт: putpobedy.ru

Проект авторĕ – Елена Порфирьева.

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

## Эмел курăкĕсем пухакан – укçа-тенкĕллĕ пулакан

**Час-часах сумлă ватăсенчен çапла каланине илтме пулать: «Хальхи саманари çамрăк ашшĕпе амăшĕ хăйсен тĕпренчĕкĕсене питĕ шелleççĕ çав, пĕр хура ĕçе те хутшăнтармаççĕ. Пирĕн вăхăтра ун пек пулман. Ачасене пĕчĕкренех мăлатук, кĕреçе тыттарнă. Ял хуçалăх ĕçĕсене явăçтарнă. Колхозра утă-улăм, çĕрулми пуçтарнă, авăн çапнă... Ялта ĕçлесе пурăнасран хăраман, çуралнă тăрăхрах тĕпленме тăрăшнă. Халĕ вара пушă пӳртсем сахал мар. Теприсен, авă, тĕп килĕнче те «вучахĕ» сӳннĕ».**



■ Н.Леонтьев.

Палăртма кăмăллă, юлашки çулсенче ĕç воспитанийĕ пирки ытларах та ытларах калаçма пуçларĕç. Ку чухнехи ăрăвăн малашлăхĕ пирки тăрăшакан ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисене пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтармаллине витĕр ăнкарать. Мăньял Хапăсри Надеждăпа Сергей Леонтьевсем ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Икĕ хĕрĕпе ывăлне те кĕçĕн ӳсĕмрех ĕçе явăçтарнă. Вĕсене «куршанак çыпăçасран» хăраман.

– Ялта пурăнатпăр та, ачасене ĕçе хăнăхтарма лайăххах. Пахча-анкартире пĕрле тăрмашатпăр, çум çумлатпăр, пахчаçимĕç шăваратпăр, касу пăхатпăр, чăхчĕп çитĕнтеретпĕр, – пĕлтерчĕ Надежда Валерьяновна.

Леонтьевсем эмел курăкĕсем те пухаççĕ. Ку енĕпе çитĕнӳсем те пур. Ывăлĕ Никита республика конкурсĕнче çĕнтернĕ. Ăна нумаях пулмасть Калинино районĕ кунĕнче ЧР Вĕрентӳ министерствин, Чăвашпотребсоюзăн Дипломĕпе тата парнипе чысларĕç. Хастар та ĕçлеме ӳркенмен çамрăка Калинино райпо тата Чăвашпотребсоюз канашĕсен председателĕсем Венера Николаевăпа Валерий Павлов чун-чĕререн саламларĕç, малалла та ӳсĕмлĕ ĕçleме çирĕп сывлăх сунчĕç.

– Пĕлтĕр эпĕ пилеш курăкĕ, хурăн çулçи, тысячелистник, шăнăр курăкĕ, ама хупахĕ (ăна çавăн пекех тепĕр майлă шапа хупаххи, сыр хупаххи теççĕ) пуçтарса типĕтрĕм. Атте-анне пулăшнипе 15 мăшăр хурăн милĕкĕ çыхрăм. Сахал мар укçа-тенкĕ ĕçлесе илтĕм, – палăртрĕ Никита Леонтьев.

Ĕç апат ыйтмасть, вăл хăй тăрантарать, теççĕ. Никита Леонтьев кăçал та каникул вăхăтĕнче эмел курăкĕсем пухнă. Кашни уяр кунпа туллин усă курнă. Пус çумне пус, тенкĕ çумне тенкĕ хушăнсан тупăшĕ те пулать. Тăрăшмасан кĕсье те çӳхе. Каччă бизнес ĕçне кӳлĕннĕрен çăкăр хакне пĕлсе ӳсет. Вăл кăçал Вăрнарти 1-мĕш вăтам шкулта 9-мĕш класс пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти экономикăпа технологи колледжне вĕренме кĕнĕ.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

## Пассажирсем хисеплеççĕ

**Çак сăмахсене каласан Вăрнар тăрăхĕнчи чылай пассажир Вăрманкасра пурăнакан Михаил Адамович Михайлов сăнарне куç умне кăларать. Вăл Вăрнар – Шупашкар маршрутпа çӳрекен автобус водителĕсенчен пĕри.**



■ М.Михайлов.

Шупашкар автовокзалĕнче Михаил Михайлова пĕрре кăна мар асăрханă, кассăна билет илме пыракансенчен нумайăшĕ Вăрнара 13 сехет те 06 минутра каякан автобус çине билет ыйтать. Пĕррехинче чăтаймарăм, билет туяннă пĕр çынран: «Мĕн сăлтавпа уйрăмах çав рейс çине ыйтрăн?» – терĕм. «Вăл рейсри водителĕ кăмăллă, пассажирсене хисеплет тата вĕсен ыйтăвĕсене те тивĕçтерме тăрăшать», – илтĕнчĕ хурав. Çак сăмахсем каярахпа хама та темиçе хутчен аса килчĕç. Чăнах та, автобуса ларсан чи малтанах пассажирсенчен чылайăшĕ ăна сывлăх сунать, хисеплени палăрать. Çул çӳрекенсен сывлăхĕпе кăсăкланнă май хăйпе юнашар лараканнисемпе кăмăллăн калаçма та ӳркенмест. Ĕçре унăн кондуктор та, контролер та, тепĕр чух полицейски евĕр те пулма тивет. Пĕррехинче çапла пĕр хĕрĕнкĕ арçын ытти пассажирсен лăпкăлăхне кансĕрлеме пуçларĕ, хăйне йĕркеллĕ тытма ыйтнине те асăрхами пулчĕ. Çак ĕçе Миша хутшăнсан тин чăркаш пассажирăн хăюлăхĕ самантрах сӳнчĕ. Тата тепĕр лайăх енĕ – таса чăваш чĕлхипе пуплени.

Михаил Адамовичпа калаçнă май ăна хисеплес кăмăл пушшех çирĕпленет, мĕншĕн тесен пассажирсене турттарас ĕçе пурнăçланисĕр пуçне килти хуçалăхра йышлă выльăх-чĕрлĕх те усрать иккен. Çăвĕпе çителĕклĕ утă-улăм хатĕрлессипе тăрăшма та майсем çитерет.

Ĕçе кайиччен кашни ир 4 сехетре тăрса Вăрнарти çĕвĕ фабрикинче ĕçлекен мăшăрĕпе пĕрле витери ĕçсене тирпейлет те, 7 сехет те 10 минут тĕлне Вăрнара çитет, Шупашкара кашни кун икĕ рейс тăвать. Çапла вара вăл ĕçлекен машинăн спидометрĕ çинче кун каçиччен 430 километр пуçтарăнать. Рейса тухмалли расписание пăсас мар тесе техникăн юсавлăхне асăрхасах тăрать. Кунсăр пуçне черет çитсен кану кунĕ илсе касу пăхать.

Хам Пăртасран пулнă май, калаçура пирĕн ялта унăн тăванĕсем нумайăи çинчен пĕлтерчĕ. Яваплă ĕçре тимлекен ывăлĕсемпе те кăмăллă вăл. Миша ялти тăванĕсемшĕн те тараватлă çын. Вĕсем Çĕнĕ çула кĕтсе илме кашнинчех Михайловсен килĕнче пуçтарăнаççĕ.

Çакăн пек ĕçчен те маттур çын пурăнать Вăрманкасра. Унăн ырă ят-сумĕ тăван ялĕнче кăна мар, Вăрнар тăрăхĕнче те, Шупашкар çулĕ тăрăх вырнаçнă ялсенче те тивĕçлипех сарăлнă.

**Геннадий ИВАНОВ.**

Пăртас.

## Ялта тĕпленес килет-и?

Пур çын та хулара пурăнасшăн мар. Хресчен чунĕллисем ялаллах туртăнаççĕ. «Ялти ипотека» программа хастарсене кил-çурт туянма е çурт çĕклеме пулăшать. Палăртма кăмăллă, Раççей Правительстви асăннă программăн вĕçленӳ тапхăрне пăрахăçланă. Ипотекăна 3 процентпа параççĕ. Яла юратакансемшĕн яллă тăрăхра тĕпленме çул уçă.

## Красноярск каччи техникумра вĕренет, предприниматель пулма ĕмĕтленет



■ Л.Вопилов.

**Ĕçчен те пултарулă, хастар та пуçарулă, пуян-чĕрелле те мал ĕмĕтлĕ çамрăксем – пирĕн малашлăх. Вĕсем професси илсе çĕршывăн чăн-чăн гражданинĕ пуласшăн, халăх ырлăхĕшĕн тăрăшасшăн. Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн студенчĕ Лев Вопилов та çутă ĕмĕтпе хавхаланакан çамрăксенчен пĕри.**

– Тепĕр икĕ çултан «Повар-кондитер» профессине алла илетĕп. Патшалăх çамрăк специалистсене тĕрев парать. Çавăнпа та дипломлă пулсан обществăшăн усăллă ĕç тума ĕмĕтленетĕп. Пĕлĕве тарăнлатса предприниматель ĕçĕ-хĕлĕпе тăрăшасшăн. Халăха пахалăхлă апат-çимĕçпе тивĕçтересшĕн, – пĕлтерчĕ вăл.

Лев Вопилов студентсен канашĕн председателĕ. Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçăн интересĕсене те хăюллăн хӳтĕлеме пултаракан вунçиччĕри çамрăк. Ăна пăшăрхантараканни те çук мар. Кун пирки вăл ытларикун Раççей Федерацийĕн сенаторне, «Единая Россия» партин председателĕн Дмитрий Медведевăн обществăлла приемнăйĕн регионти уйрăмĕн ертӳçине Николай Владимирова йышăну вăхăтĕнче пĕлтерчĕ. Техникумра ăста преподавательсем вĕрентеççĕ-ха. Кирлĕ оборудовани те пур, анчах та мастерскойсем валли пӳлĕмсем çук. Çавăн пекех студентсен канашĕн председателĕ тепĕр çивĕч ыйту çĕклерĕ. Вĕрентӳ учрежденийĕнче столовăй ĕçленĕ, кивĕ пулнăран ăна пăснă. Çавна май студентсем халĕ «Центральное» кафере апатланаççĕ. «Столовăй питĕ кирлĕ», – терĕ Лев Вопилов. Сенатор кашни ыйтăва тимлĕхе илчĕ. Пулăшма шантарчĕ.

Яш каччă Красноярск крайĕнче çуралса ӳснĕ. Вăл Вăрнар тăрăхне ăнсăртран лекмен. Унăн аслашшĕ Малти Ишекрен.

– Эпĕ Чăваш Республикине, Вăрнар енне питĕ юрататăп. Кунта тавралăх епле илемлĕ. Çыннисем тата мĕнлерех ырă, тараватъ! Пĕр иккĕленмесĕрех Вăрнарти техникумра вĕренме пуçларăм, – кăмăллăн калаçрĕ Лев Вопилов.

Ун пек мал ĕмĕтлĕ те сăпайлă яшсем Вăрнар енче тĕпленсе бизнес ĕçне кӳлĕнсен район, республика мăнаçĕ çултан-çул ӳссе пырĕ.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

## Патшалăх пулăшать

**Хăй тĕллĕн ĕçлекенсем патшалăх субсидийĕсене тивĕçеççĕ. Пулăшăва республикăри 49 çын илнĕ ĕнтĕ. ЧР Ял хуçалăх министерствин пресс-служибинчен пĕлтернĕ тăрăх, субсидие килти хушма хуçалăх тытакан, професси тупăшĕнчен налук тӳлекен илме пултарать.**

Укçа-тенке ăçта яма пулатьха? Акă вĕсем тĕп енсем:

- ➡ ирĕкре çитĕннĕ пахчаçимĕçе сутма (тоннăшăн 2000 тенкĕ);
- ➡ çĕрулми вырнаçтарма (тоннăшăн 3000 тенкĕ);
- ➡ сĕтлĕ ĕне тытма (пĕр пуçшăн – 5500 тенкĕ, икĕ пуçшăн – 6500 тенкĕ, виçĕ е ытларах пуçшăн – 7500 тенкĕ);
- ➡ ашлăх ăратĕнчи ĕнене усрама (пĕр пуçшăн 5500 тенкĕ)
- ➡ сурăхсемпе качакасем усрамма (пĕр пуçшăн 500 тенкĕ);
- ➡ ĕнесем усрама (пĕр пуçшăн 70 пин тенкĕ);
- ➡ качакасем туянма (пĕр пуçшăн 5000 тенкĕ);
- ➡ ăратлă вăкăрсен ар вăрлăхне туянма (тăкакăн 90 проценчĕ саплашăнать);
- ➡ ял хуçалăх техники, оборудовани (тăкакăн 40 проценчĕ);
- ➡ минудобрени туянма (тăкакăн 30 проценчĕ);
- ➡ хурт-хăмăр ĕçĕ валли материалсем илме (тăкакăн 40 проценчĕ);
- ➡ тăпрана агрохими тĕпчевĕ тума (тăкакăн 50 проценчĕ);
- ➡ акмалли вăрлăха лабораттори тĕпчевĕ витĕр кăларма (тăкакăн 50 проценчĕ саплашăнать).

## Çамрăксене – çăмăллăх

Яллă тăрăхра пурăнас тата ĕçлес текен çамрăксем еннелле патшалăх пулăшу аллине тăсать. Вĕсене çурт-йĕр çавăрма, туянма ипотекăна 0,1 процентпа пама Ял хуçалăх министерствин ĕçченĕсем саккун проектне хатĕрленĕ. Патшалăх пулăшăвĕпе 35 çула çитменнисем – ял хуçалăхĕнче е социаллă ĕçре тимлекенсем, е яллă тăрăхра предпринимательствăна кӳлĕннисем усă курма пултараççĕ.